397-137

Ухсай Яккӑвӗ

# Пуканесен бригади



УХСАЙ ЯКĂВĔ

# ПУКАНЕСЕН БРИГАДИ

*Ўкерчĕкĕсене*
*Г. ХАРЛАМПЬЕВ тунă*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР—1939

КĔÇĔН ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЛЛИ



I.

Питĕ ăслă шăллăм пур ман,
Чăн-чăнах чипер ача,
Тап-таса хăй, кирĕк курмăн,
Кăмăлĕ çемçе, ачаш.

Ир-ирех паян вăранчĕ,
Çăвăнчĕ вăл супăньпе,
Хăнари пекех тумланчĕ,
Тăхăнчĕ шап-шур кĕпе.

Куçкĕски çине пăхса та
Якатать çÿçне темччен.
Уринче çемçе кăçатă,
Шурă шарăх майĕнче.

— Мĕн тăватăн, шăллăм,—терĕм,—
Çакă вичкĕн сивĕре?
— Выçă пулĕ анчăк,—терĕ.
(Анчăкки тулта вĕрет.)

Пĕчĕкçеççĕ валашки ак,
Куркана лĕп шыв ярсан,
Çăнăх сапрĕ, тухрĕ кăпăк —
Йăхăрать шик шăхăрса.

Çăмламас хура çех анчăк
Тухрĕ çенлĕк айĕнчен.



Ик уран тирпейлĕн ларчĕ,
Пăхрĕ шăллăм куçĕнчен.

Ут шăварнă каччă тейĕн
Кирлене пăхса илсен,
Анчăкпа темле телейлĕн
Калаçать селĕп чĕлхен:

— Пĕлтĕр тытнă кашкăр майлăн
Пысăк пулăн, тусăм ман.
Санпала вара эп кайăп
Колхоза хурал тăма.

— Урусем ан пулччăр кукăр,
Çӳрĕпĕр,—тет,—куяна.
Какайпа шур тулă çăкăр
Преми парăп,—тет,—сана.

Çирĕ, çирĕ те хай анчăк
Тăсрĕ пĕчĕк тяппине,
Кирлене вăл алă пачĕ,
Чăмрĕ çенлĕкĕн айне.

Шăллăм пăхрĕ, йăл-йăл кулчĕ,
Тухрĕ, вĕçрĕ йĕлтĕрпе.
Юр çиçетчĕ, юр пит çутчĕ
Кĕмĕл тĕслĕ шевлипе.

Мĕн калам сире тата та
Шăллăмçăм Кирле çинчен?
Çапăçса туса курмантăр
Урамра вăл халиччен.

Çуркунне çитсен, курап эп:
Касчене чупса çӳрет,
Теветкел турпас карапĕ
Шырланри шывра ишет,

Е патак тытса утланнӑ,
Ахӑрса чупса иртет,
Е чулсем вӑл купаланӑ:
—Днепрострой тӑватӑп,—тет,

Е ҫерем ҫинче путекӗн
Сиккелет вӑл ҫаруран.
Шӑллӑм, шӑллӑмҫӑм—чечекӗм,
Эс пурне те пултаран!

II

Шӑллӑм кӗчӗ. Унӑн пичӗ
Хӗрлӗ-хӗрлӗ таҫ хӑмаҫ,
Ҫийӗ-пуҫӗ лайӑх, питӗ,
Хӑй ӗҫчен—текех тӑмасть.

Ывӑҫне тултарнӑ тулӑ,
— Мӗн тӑватӑн, шӑллӑм?—теп.
— А, кӑсъя ҫиесшӗн пулӗ,
Юрлама пӑрахрӗ,—тет.

Читлӗхри кӑсъя, кӑсъяҫӑм
Юрламашкӑн тытӑнать.
Ҫунатне сарса веҫ ячӗ,
Ҫуркунне пек туйӑнать.

Шӑллӑм тытрӗ пӗчӗк хачӑ,
Пушӑта касать кӑна.
Ут мӗлки туса хӑтланчӗ,
Утлантарчӗ пӗр ҫынна.

Мӗн пулать кӑштах сӑнар-ха,
Пушӑт йытӑ сиккелет,—

Иванюк кукка сунарçă
Тукмака тытасшăн,тет.

Чўрече çине тĕрлерĕ,
Касрĕ темĕн чухлĕ хут.
—Мĕн тăватăн шăллăм?—терĕм,
Мĕншĕн йышлă юланут?

— Пăх, пичче, илемлĕ мар-и,
Урăм-сурăм вăрçă,—тет.
Ак, Чапаев утлă çарĕ,
Колчака,—тет,—хўтерет.



III

Шăллăм тупнă вăйă халĕ,
Хăйĕн тĕллĕн пелкенет.

Сак ҫинче пит йышлă халăх,
Тĕрлĕ тĕслĕ пукане.

Хăшĕ ларнă, хăшĕ тăнă,
Темĕскер пулса иртет.
— Теветкер Макар Мартынĕ
Хуратул вăрланă,—тет.

Вăл ҫĕрме пуян кĕрӳшĕ,
Конюхра пулсан иккен,
Кĕлете ялан кĕрӳҫĕн
Шухăшланă тем ҫинчен,

Вăррăн куҫĕ курнă уҫă
Тĕксĕм тĕттĕм каҫхине.
Кахалах хуралҫă Уҫăп
Тупнă тутлă ăйхине.

Ҫакăнта пуху пуҫланнă,
Мартына тăваҫҫĕ суд.
Кĕлетрен ҫĕрле вăрланă,
Вăл колхозшăн ҫичĕ ют.

Пĕчĕк пукане-свидетель,
Хĕрлĕ галстук мăйĕнче,
Вăл калать куҫран тĕлме тĕл
Хăй вăрра тытни ҫинчен.

Вăл Илюш хăта Симунĕ,
Чи примерлă пионер.
Пăх-ха, унăн ҫийĕ-тумĕ
Еплелле хитре, чипер!

Лешĕ пысăк пукани вăл—
Районран килни—судья,



Юнашар ларать, пит хапăл
Пирĕн бригадир Илле...

Селĕп чĕлхӳпе калатăн,
Чунăм, шăллăмçăм, кĕрлен!
Шĕлепкеллĕ пуканин сан
Аллинче мĕскер, Кирле?

— Вăл колхоз правлени членĕ—
Тукасри Христун пичче,
Сехетне йĕрлет, стрелки мĕн
Кăнтăрла палли çинче.

— Шăллăм, шăллăм, мĕн вылятăн?
Ывăнсах ĕнтĕ каян,
Пухуна хăçан хупатăн,
Суд пырать пит нумая?

— Ах, пиччеçĕм, кĕт-ха,—терĕ,—
Юрамасть часах хупма,
Ак судья тинех пуçларĕ
Приговора вулама.

Мартына, итлет-ни, пачĕç
Вăрланăшăн виçĕ çул.
Халăхсем пурте ал çупрĕç,—
Вăррăн сăнĕ-пичĕ çук.

— Шăллăм, эс ача пулин те
Ăстăна тухатăн пуль...
Аçталла каять-ши ĕнтĕ
Çакă çут автомобиль?

— Ку автомобиль, пиччеçĕм,
Района халь каймалла,
Ав ларать судья пĕччен çеç,
Шофер çаврать руля.





## IV

Йышлă пукани эшкерĕ*)
Путăк-шăтăк çулсемпе
Çÿресе темех йĕркелерĕ,
Çыннисем ăш кĕрĕкпе.

Тĕмеске çинче хаяррăн
Çăрхаларĕ шур упа,
Унăн умĕнче кăшкарăн,
Çаврăнса çури чупать.

— Шăллăм, шăллăм, мĕн айкашрăн
Кулăшла вăйă вылян,
Пукане çынна тытатăн—
Яраплан çине лартан?

Шур сухал чике старик пек
Пукане мĕнле этем,
Ку çынсем, шăллăм, епле, теп,
Пурăнаççĕ çурçĕрте?

Ярапалан вĕçсе хăпарчĕ,
Кăмака çине ларать.
Тĕлĕнетĕп: мĕн пуçланчĕ?
Шăллăм пăхрĕ те калать:

— Çурçĕрти пăрсем тусем пек
Хупăрлаççĕ тĕркĕшсе,
Вăйлă, паттăр Шмидт карапĕ
Çапăçать те кĕрмешет.

---

*) Эшкер—ушкăн.

Парăнмасăр, ишнĕçемĕн
Кĕнĕ пăрла çурçĕре.
Кĕрешсе вăл лўчĕркеннĕ,
Арăш-пирĕш сивĕре.

Путнă, аннă Шмидт карапĕ.
Вĕрнĕ çиллĕ сăлпăран.
Тăрнасен кĕрхи карти пек
Вĕçрĕ çичĕ яраплан.



Çынсене хăтарнă халĕ,
Леçрĕç чаплă Мускава,
Вĕсене ал пачĕ Сталин,
Вĕсенче хĕрў хăват.

Пăр çинче юлман никам та,
Çăрхалать упа текех.
Вăл та ĕнтĕ питĕ ватă
Варуççи инке пекех...

— Шăллăм, калаçма пултартăн!
Ним юлман сакку çинче,
Чăннипех услап юлхавлăн
Шур упа ларать пĕччен.

Ушкăн пукани. Ăçта вăл?
Кăмака çинче иккен.
Эх, унта вĕсен хавасĕ
Килнĕ имĕш çурçĕртен.

Пысăк пуканин сухалĕ
Вăрăм—пулĕ икĕ шит.
Шăллăм, пĕлтĕм эп те халĕ,—
Вăл иккен профессор Шмидт.



## V

Шухӑшларӗ уй-уйларӗ
Селӗп шӑллӑмҫӑм Кирле,
Ҫӗнӗрен вӑйӑ пуҫларӗ,
Пуканисемпе пӗрле.

Урапа ҫине тиерӗ
Кӳлчӗ ячӗ анчӑкне,
— Тилхепе тытса пыр!—терӗ.
Хушрӗ пӗр пуканине.

— Шӑллӑм! Ӑҫталла каясшӑн
Лартрӑн анчӑка кӳлсе?
— Мӗншӗн ушкӑн-ушкӑн йышлӑн
Пухӑннӑ пуканисем?

— Тыр вырма каять бригада,
Тӑкӑна пуҫланӑ вир.
Кучер пек ларать пӗр вата,
Вӑл Филиппов—бригадир.

Шӑллӑм, шӑллӑм, эс курмарӑн,
Пӑх-ха, чӳрече ҫинче
Юлчӗ пукани - хӗрарӑм,
Ан хӑвар ӑна пӗччен.

— Вӑл Ульан аппа Нaҫтаҫӗ,
Колхоза хальччен кӗмен,
Ҫавӑнпа юлать пӗччен ҫӗ,
Кӑмӑлӗ ытла тӳрмен.

Шӑллӑмҫӑм кӑштах лӑпланчӗ,
Алӑка ярах уҫсан

Вĕрчĕ-вĕрчĕ те хай анчăк,
Тухрĕ урапа туртса.
Чип-чипер хитре бригада
Кĕчĕ аслă урама.
Шартлама хаяр кунта та
Шăллăм кайрĕ тыр вырма.



Редактор КУЗЬМА ЧУЛГАСЬ. Техредактор Ф. ЯКОВЛЕВ.

Послано в производство 9/III-39 г. Подписано к печати 1/XII/39 г.
Упол. Чувашглавлита № 1299 Заказ № 643. Формат бум. 60X92 1/16
Объем 1 п. л. Тираж 5000 экз.

Отпечатано в типографии № 1 Наркомместпрома ЧАССР.
г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати.

2409

Хакӗ 50 пус.

ЯКОВ УХСАЙ

КУКОЛЬНАЯ БРИГАДА

на чувашском яз.

ЧУВАШГОСИЗДАТ